**Чăваш халăх писателĕ Александр Артемьев çуралнăранпа 80 çул çитнĕ май**

# “КУЛЬТУРА СИМВОЛĔ, ПРОЗĂРИ ПОЭТ”

## "ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИН ПРИНЦĔПЕ ЧУХĂНĔ"

Çапла çырса хурать 1980 çулта Чăваш халăх писателĕ ятне илсенех Александр Артемьев хăйĕн дневникĕнче. Тĕрĕссипе каласан, вырăсла палăртать вăл шухăшне: “Принц и нищий чувашской литературы”, – тет. Çакнашкал пысăк чыса тивĕçлĕ пулни ăна савăнтарман та иккен. Тен, чĕринче хĕрхÿ туйăмсем çеç çуратнă? Пичетре тухнă пĕрремĕш калавĕ – “Пĕчĕк Лийăн пысăк савăнăçĕ” /1947 çул/ – хыççăнах “Акă чăн-чăн чăваш писателĕ, чăн-чăн талант килчĕ” текен ырлав-хаклава тивĕçнĕскер, тăван литературăна “Салампи”, “Улма йывăç авăнать”, “Алтăр çăлтăр”, “Ан авăн, шĕшкĕ”, “Çул уçă”, “Шурă çÿçлĕ хĕр” тата ытти вун-вун хайлавĕпе, çирĕм ытла кĕнекипе çÿлерех те çÿлерех пусăма çĕклесе пынăскер, вăл нимле указсăрах хăй тахçанах халăх çыравçи пулнине те, тăван халăхĕ те çаплах шутласа сума сунине те лайăх туйнă, паллах /ахальтен-им пирвайхи хайлавĕсем пичетленсенех çамрăксен кумирĕ пулса тăнă вăл, яш-кĕрĕм ун пирки: “Александр Артемьев – пулас Лев Толстой”, – тесе мăнаçланса каланă/. Анчах та вышкайсăр пултарулăхне вăхăтра хакламасăр çав ята кая юлса пани те, ĕçтешĕсен ăмсанăвĕпе тÿре-шара ăнланманни те, чĕлхемĕр, халăхăмăр хисепсĕре тухса пыни те, çыравçă, литература, культура пĕлтерĕшĕсем чакса пыни те, пурнăçĕ тикĕс килменни те палăрмаллах ыраттарнă, çунтарнă пулĕ чунне.

Пурнăçĕ тенĕрен, акă мĕнле аса илет **Чăваш халăх поэчĕ Георгий Ефимов** Александр Спиридонович кунçулĕн пĕр саманчĕ пирки: “1958 çулта /ун чухне А. Артемьев – “Саламби” повеçпе халăхăмăра тĕлĕнтерме ĕлкĕрнĕ автор – **П.Ç.**/ пире Артемьевпа иксĕмĕре пĕр çуртрах, çитменнине пĕр подъездрах хваттерсем панăçĕ. Йывăр пулчĕ ятлă-сумлă писателе çав хваттере илме. Ун чухне КПСС Шупашкар хула комитечĕн секретарĕнче П.А. Чичикин ĕçлетчĕ. Çав юлташ Муркаш районĕнчи Хорнуйĕнче – арăмĕн ялĕнче пурăнакан Артемьев пирки: “Его на пушечный выстрел не надо допускать к Чебоксарам”, – тесе персе ячĕ”. Килсĕр-çуртсăр писателĕн тĕрĕсмарлăха кура чунĕ тăвăлнăранах-тăр тепĕр чухне ытла хĕрсе кайса калаçасси те, шавлакаласси те пулнă-мĕн. Александр Спиридонович пысăк талант иккенне ĕнентерних чиновника ЧАССР Писательсен союзĕнчен пынă сăмах ăстисем. “Артемьев, Илпек Микулайĕ тата эпĕ, виççĕмĕр пĕр çуртра пурăннă, – тет Георгий Андреевич. – Хваттер илсенех пĕрер пукан туянтăмăр. Ман пата кĕрсе, урайне хаçат сарса, çĕр улмипе селедка çисе çак чаплă куна палăртрăмăр”.



## "АРТЕМЬЕВ ПУРНĂÇĔ ХĂЕХ РОМАН"

Элĕк районĕнчи Тури Вылă ялĕнче авăн уйăхĕн 14-мĕшĕнче çут тĕнчене килнĕ писатель, пĕчĕк чухнехилле каласан Сантăр, çемьери виççĕмĕш ача пулнă, лăпкă та вăтанчăк, вашават кăмăллă та çемçе чунлă ÿснĕ. Пĕррехинче, аппăшне юратман çынна качча пама тăрсан, ăна хĕрхенсе чунтан таталса йĕнĕ. Ир тăлăха юлнă Сантăр – вăл тăхххăрта чухне ашшĕ вилнĕ. Иккĕмĕш класрах сăвăсем шăрçалама тытăннă А. Артемьев. Шкул çулĕсенчех вырăсларан та, нимĕçлерен те Пушкин, Лермонтов, Некрасов, Фет, Гейне, Шиллер хайлавĕсене, чăвашларан вырăсла “Нарспи” поэма сыпăкĕсене, Çеçпĕл, Ухсай, Алка, Эсхель сăввисене куçарса пăхать. 17 çула çитиччен пурĕ 234 сăвă, 3 поэма, 2 повесть, 1 пьеса çырать. Тĕлĕнмелле мар-и-ха çакă! Пирĕншĕн, вулакансемшĕн, çыракансемшĕн те интереслĕ самант питĕ нумай А. Артемьев пурнăçĕнче. Хаяр вăрçă çулĕсенче шăпи ăна Порт-Артура, тахçан ашшĕ çÿренĕ вырăнсене илсе çитерет. Тепĕр тĕслĕх. Пĕррехинче вăл йывăр аманса Киров облаçĕнчи госпитале лекет. Суранĕ юхма, шăмă çĕрме тытăнать. Килне чылай хушă çыру яраймасть. Тури Выла çав вăхăтра “хура хут” вĕçсе çитет. Амăшĕ ывăлне асăнса кĕлĕ тăвать, чиркÿре асăнтарать, вилнĕ хутне турăш умĕнче тытать. Акă пĕррехинче А. Артемьев 10 кунлăха тăван ялне отпуска килет. Вăл çĕрле килне пырса кĕрсен амăшĕ малтанах ĕненмест те, хăраса ÿкет...

Виçĕ хут аманнă Александр Спиридонович вăрçăра. Артемьев радист, гварди сержанчĕ хăюллă та паттăр çапăçнине **С.Данильченко генерал-майор** çапла аса илет: “Артемьев радиста питĕ кирлĕ донесени пĕлтернĕ вăхăтра амантаççĕ. Анчах вăл юн йăрласа юхнине пăхмасăр ĕçе пĕтеричченпăрахса кайман...” Çакă та кăсăклă: кайран, çирĕм çулсем иртсен, писатель-фронтовик хăйĕн командирне шыраса тупать, унпа çыру çÿретме тытăнать...

## "САЛАМПИ"

“Саламние” малтан “Илемпи” ят парасшăн пулнă, – тет халăх писателĕн иккĕмĕш арăмĕ Валентина Петровна Алексеева. – Сюжетне вырăс карчăкĕ Александра Ильинична Баракина 1948 çулта каласа панă”. “Çав каçах повесть планне палăртса хутăм”, – çакнашкал йĕркесем пур сăмах ăстин дневникĕнче. Ĕçе тытăнас умĕн кашни сăнарăн паспортне хатĕрленĕ вăл. Çырасса вара “Саламние” Шупашкарта, Нагорная урамĕнчи хваттерĕнче тата пĕрремĕш мăшăрĕн – Октябринăн тăван ялĕнче – Муркаш районĕнчи Хорнуйĕнче çырнă. 1954 çулта вулакан умне кăларнă ăна автор. Вăл вăрçă хыççăнхи çамрăксен юратăвĕпе туслăхне, кăмăлĕ-сипетне сăнлать пулин те, писатель чĕри витĕр 50 çул каяллах шăранса тухнине пăхмасăр, паянхи кун та яш-кĕрĕмĕн юратнă хайлавĕсенчен пĕри шутланать. Мĕншĕн-ши? Мĕншĕн тесен, Геннадий Хлебников литература тĕпчевçи калашле, А. Артемьев этемĕн шалти, чун пурнăçне витĕр курса ăнланать. Мĕнле илем-ши вăл, Артемьев идеалĕ? Ку вăл, чи малтан, – ыттисенчен пачах уйрăлса тăракан илемлĕ, вăйлă, пултаруллă çын. Писатель идеал – герой илемне тÿрремĕн кăтартса, хăй тĕлĕннине пытармасăр сăнласа парать...

Александр Спиридонович “Саламние” пĕрремĕш арăмĕн тăван ялĕнче те çырнă терĕмĕр. Шăпа çапла пÿрнĕ-тĕр – Октябринăпа уйрăлма тивнĕ вĕсен. Анчах А. Артемьев ачисем патне тăтăшах çÿренĕ-мĕн, пăрахман. Иккĕмĕш арăмĕ – Валентина Петровна та вĕсене яланах хапăл, халĕ те лайăх кĕтсе илет. К.В. Иванов ячĕллĕ Литература музейĕнче халăх писательне асăнса иртгернĕ каçа та пĕрлех пычĕç вĕсем: Валентина Петровна тата Александрпа /асли/ Александра /кĕçĕнни/. Ячĕсенченех куратпăр: ашшĕне хисеплесе панă.

В.П. Алексеева аса илнĕ тăрăх, вăл Александр Спиридоновичпа 1948 çулта паллашнă. “Петĕр Хусанкайпа пĕрлеччĕ вăл ун чухне. Эп нимĕçле сăвă вулаттăм, Александр Артемьев манпа нимĕçле калаçрĕ. Унтан 1956 çулта Хусанта тĕл пултăмăр. Каллех Хусанкайпа иккĕшĕ пĕрлеччĕ, сцена çинче тăраканскерсем, мана асăрхасан ятарласа анчĕç. Каярахпа “Саламние” кĕнеке тăрăх иртгернĕ конференцире тепре куртăм, çавăн чухне çывăхлантăмăр...”

Чăваш халăх писателĕ, культура символĕ, чăн-чăн талант, чăваш литературин çăлтăрĕ, прозăри поэт, чĕлхе ăсти... Çак хисеп-хаклавсене пĕрлештерсе тăрать Александр Спиридонович Артемьев. Вăл çуралнăранпа авăн уйăхĕн 14-мĕшĕнче 80 çул çитрĕ. Хам эпĕ ăна писательсен пухăвĕсенче ытларах курнă. Анчах темшĕн асра 80-мĕш çулсенчи тĕл пулу юлнă. Юлташсемпе Мир проспекчĕпе утса пыраттăмăр. Çĕнĕ вокзал çывăхĕнче, çыхăну уйрăмĕ патĕнче сасартăк Александр Спиридоновича асăрхарăмăр. Ятарласа пырса сывлăх сунтăмăр. Вăл пире пурне те алă тытсах саламларĕ. Куçĕсем йăвашшăн пăхатчĕç пулин те темле асамлăх палăратчĕ вĕсенче...

**Петĕр ÇĂЛКУÇ.**

***Сăн ÿкерчĕкре:*** *Чăваш халăх писателĕ А.С.Артемьев.*